ИИСУС ХРИСТОС КӐНА ҪӐЛАТЬ

Вӑл Ывӑл ҫуратӗ, эсӗ Ӑна Иисус ятлӑ хурӑн: Вӑл Хайӗн халӑхне ҫылӑхӗсенчен ҫӑлӗ. Матфей 1:21

Мӗншӗн тесен Турӑ тӗнчене ҫав тери юратнӑран Хайӗн пӗртен-пӗр Ывӑлне панӑ, Ӑна ӗненекен кирек кам та пӗтмелле мар, ӗмӗрлӗх пурӑнӑҫлӑ пултӑр тесе. Иоанн 3:16

«Эпӗ – ҫул та, чӑнлӑх та, чӗрӗлӗх те», – тенӗ ӑна Иисус. Ашшӗ патне Ман урлӑ пулмасан никам та ҫитеймест. Иоанн 14:6

Ҫӑлӑнӑҫ урӑх никамран та пулмасть: пире ҫӑлӑнма пултаракан ят тӗнчере этемсене панӑ урӑх никам та ҫук». Апостолсен ӗҫӗсем 4:12

Мӗншӗн тесен, чи малтан эпӗ хам мӗн илнине сире вӗрентрӗм: Ҫырура каланӑ пек, Христос пирӗн ҫылӑхсемшӗн вилнӗ; Ҫырура каланӑ пек, ӑна пытарнӑ, виҫҫӗмӗш кунне чӗрӗлсе тӑнӑ: 1 Коринф 15:3—4

Унӑн Юнӗ урлӑ пире ҫӑлса хӑварнӑ, ҫылӑхсене каҫарнӑ. Ефес 1:7

And the gospel must first be published among all nations. MARK 13:10

Эпир тӑватӑ чӑнлӑха туллин ӑнланса илмелле:
1. Турӑ сана ҫав тери юрататать.
Вӑл сире Хайпе пӗрле пӗлӗтре ӗмӗрлӗх пурӑнӑҫ парасшӑн.
Мӗншӗн тесен Турӑ тӗнчене ҫав тери юратнӑран Хайӗн пӗртен-пӗр Ывӑлне панӑ, Ӑна ӗненекен кирек кам та пӗтмелле мар, ӗмӗрлӗх пурӑнӑҫлӑ пултӑр тесе. Иоанн 3:16
Вӑл сире Хайпе пӗрле тулӑх та пӗлтерӗшлӗ пурнӑҫ пултӑр тет.
Вӑрӑ вӑрлама, вӗлерме, пӗтерме кӑна килет. Эпӗ вӗсем пурӑнӑҫлӑ пулччӑр, пурӑнӑҫлӑрах пулччӑр тесе килтӗм. Иоанн 10:10

Апла пулин те, нумайӑшӗ пӗлтерӗшлӗ пурнӑҫпа пурӑнмасть, ӗмӗрлӗх пурнӑҫ пуррипе ҫуккине шанмасть, мӗншӗн тесен...
2. Этем ҫутҫанталӑкран ҫылӑхлӑ. Ҫавӑнпа вӑл Турӑран уйрӑлнӑ.
Пурте ҫылӑха кӗнӗ.
Мӗншӗн тесен пурте ҫылӑха кӗнӗ, турӑ мухтавлӑхӗнчен пӑрӑннӑ; Рим 3:23
Мӗншӗн тесен укҫана юратни — пур усалӑн та тымарӗ... 1 Тимофей 6:10
Ҫылӑх тӳлевӗ — вилӗм.
Мӗншӗн тесен ҫылӑх тӳлевӗ — вилӗм... Рим 6:23

Библире икӗ тӗрлӗ вилӗм ҫинчен каланӑ:
• Ӳт-пӳ вилӗмӗ
Ҫынсем пӗрре вилмелле, унтан вара суд пулать: Еврейсем 9:27
• Чун-чӗре вилӗмӗ е тамӑкра Турӑран ӗмӗрлӗхех уйрӑлни
Анчах та хӑравҫӑсем, ӗненменнисем, ирсӗррисем, ҫын вӗлерекенсем, аскӑнлӑхсем, тухатмӑшсем, йӗрӗхсене пуҫҫапакансем, пур суеҫӗсем те вут-сулӑмпа кӳкӗртпе ҫунакан кӳлӗре пулӗҫ. Ӳлӗмхине 21:8

Енчен те этем хӑйӗн ҫылӑхне пула Турӑран уйрӑлса тӑрать пулсан, ҫак ыйтӑва татса пама мӗнле май пур?
Эпир час-часах ҫапла шутлатпӑр: ҫак ыйтӑва татса памалли майсем: тӗн, ырӑ ӗҫсем тата лайӑх йӑла-йӗрке.
Анчах Турӑран пӗртен-пӗр решени пур.
3. Иисус Христос — пӗлӗт ҫине пӗртен-пӗр ҫул.
Ку вӑл — Турӑ пӗлтерни.
«Эпӗ – ҫул та, чӑнлӑх та, чӗрӗлӗх те», – тенӗ ӑна Иисус. Ашшӗ патне Ман урлӑ пулмасан никам та ҫитеймест. Иоанн 14:6

Вӑл пирӗн ҫылӑхсемшӗн туллин тӳлерӗ.
Мӗншӗн тесен Христос та ҫылӑхсемшӗн пӗрре асапланнӑ, пире Турӑ патне илсе ҫитерес тесе, Христос ӳт-пӳпе вилнӗ, анчах Сывлӑшпа чӗрӗлнӗ: 1 Петр 3:18
Унӑн Юнӗ урлӑ пире ҫӑлса хӑварнӑ, ҫылӑхсене каҫарнӑ. Ефес 1:7
Ӑна ӗмӗрлӗх пурӑнӑҫ пама сӑмах пани пур.
Ывӑлне ӗненекен ӗмӗрлӗх пурӑнӑҫлӑ, Ывӑлне ӗненмен ҫын пурӑнӑҫ кураймӗ; анчах Турӑ ҫилли ун ҫинче тӑрать. Иоанн 3:36
Мӗншӗн тесен ҫылӑх тӳлевӗ — вилӗм; анчах та Турӑ панӑ парне вӑл — Иисус Христос Хуҫамӑр урлӑ ӗмӗрлӗх пурӑнӑҫ. Рим 6:23

4. Ҫӑлӑнас тесен, пирӗн Иисус Христоса ӗненмелле.
Пирӗн ҫӑлӑнӑҫ Иисус Христоса ӗненнипе Турӑ ырӑлӑхӗпе ҫыхӑннӑ.
Мӗншӗн тесен эсир ӗненнипе Турӑ ырӑлӑхӗпе ҫӑлӑннӑ; анчах ку сирӗнтен мар, вӑл Турӑ панӑ парне, ӗҫрен мар, никам та мухтанмӗ. Ефес 2:8—9
Ҫӳлхуҫа ятне чӗнекен кирек кам та ҫӑлӑнӗ». Рим 10:13

Ҫылӑхлӑ ҫыннӑн кӗлли
Ҫакна ӗненсе кӗлтӑвӑр:
Иисус Турӑ, мана юратнӑшӑн пысӑк тав сана. Эпӗ хам ҫылӑхлӑ пулнине йышӑнатӑп, сирӗнтен каҫару ыйтатӑп. Тавтапуҫ сана хӗрес ҫинче вилнӗшӗн, пытарнӑшӑн тата манӑн пур ҫылӑхӑмсемшӗн тӳрӗлсе тӑнӑшӑн. Эпӗ сана хамӑн Ҫӳлхуҫам тата Ҫӑлаканӑм вырӑнне хурса шанатӑп. Эпӗ санӑн ӗмӗрлӗх пурнӑҫ парнине йышӑнатӑп та хамӑн пурнӑҫа сана паратӑп. Хӑвӑн пур ӳкӗтне те тытса тӑма, Хӑв умӑнта юрӑхлӑ пулма пулӑшсам мана. Аминь.

Эсир Иисус Христоса шаннӑ пулсан, сирӗнпе ҫакӑн пек пулса тухнӑ:
• Халӗ ӗнтӗ эсир Турӑпа пӗрле ӗмӗрлӗх пурӑнӑҫ илетӗр.
Мана Яраканӑн ирӗкӗ акӑ мӗнре: Ывӑлне куракан, Ӑна ӗненекен кирек кам та ӗмӗрлӗх пурӑнӑҫлӑ пултӑр, Эпӗ ӑна юлашки кун чӗртсе тӑратӑп». Иоанн 6:40
• Сирӗн пур ҫылӑхӑр та тӳленӗ, каҫарнӑ.
(иртнӗ, хальхи, пуласси)
Иисус вара ҫылӑхсемшӗн пӗр парне кӳнӗ хыҫҫӑн ӗмӗрлӗхех Турран сылтӑм енне ларнӑ; Еврейсем 10:12
• Эсир Турӑ умӗнче ҫӗнӗ ҫын. Ку санӑн ҫӗнӗ пурнӑҫӑн пуҫламӑшӗ.
Ҫавӑнпа та кам та пулин Христоспа пӗрле пулсан, вӑл ҫӗнӗрен пултарнӑ ҫын; акӑ пурте ҫӗнӗ пулса тӑчӗ. 2 Коринф 5:17
• Эсӗ Турӑ ачи пулса тӑтӑн.
Анчах та Хӑйне йышӑннӑ ҫынсене, Хӑйӗн ятне ӗненекенсене, Турӑ ывӑлӗсем пулма ирӗк панӑ: Иоанн 1:12

Ырӑ ӗҫсем пирӗншӗн ҫӑлӑнмалли май мар, вӗсем пирӗн ҫӑлӑнӑҫӑн ҫирӗплетӗвӗ е ҫимӗҫӗ.
Мӗншӗн тесен эпир – Унӑн ӗҫӗсем, пире Христос Иисуспа пӗрлештерсе ырӑ ӗҫсем тума пултарнӑ, ҫав ӗҫсене пурнӑҫласа пурӑнма Турӑ малтанах хатӗрлесе хунӑ. Ефес 2:10
Тур сыхлатӑр!